Çак тапхăрта 183 лару йĕркеленĕ, вĕсенче 2953 ыйту пăхса тухнă
ЧР ПАТШАЛĂХ КАНАШĔ – 20 ÇУЛТА 2

Гродно хулине нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларас тесе Н.Волковпа В.Шапошникова пурнăçне шеллемен
ВИЛĔМСĔРЛĔХЕ ЯРСА ПУСНĂ ЕНТЕШСЕМ... 3

РФ пенсионерсен пĕрремĕш спартакиадинче республика чысне 8 ветеран хŭтĕленĕ
АСЛĂ ĂРУ ХАСТАРĔСЕМ СПОРТСĂР ПУРĂНАЙМАÇÇĔ 4

ПАЯН ВУЛĂР ТЕПĔР НОМЕРТЕ

Уява килекенсем пире тивĕçлипе хаклаччăр тесен хамăрăн наци рейтингне туса хумалла
ПĔР-ПĔРНЕ ĂНЛАННИ ПĔЛТЕРĔШЛĔ 2

"Хĕвеллĕ кустăрмасем" велосипед çине ларма чĕнеççĕ
"СПОРТ" хушма кăларăм 3

Арçури çырминчен чăнкă ту çине çичĕ сакăлтăкран иртсе, çичĕ пăрăнчăкран çаврăнса улăхмалла. Çав вырăнсенче лав сумне арçурисем çыпçăнаççĕ, ăна сиен кŭреççĕ тенĕ
ТĂВАР ВĂРРИ... 4

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

114 /26520/ № Ытлари кун, 2014, çĕртме (июнь), 17 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Экзамен ыйтусем çуратать

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер республика Правительствин членĕсемпе, федерацин территори органĕсен тата хула округĕсен ертŭçисемпе канашлу ирттернĕ.

Малтанах Михаил Игнатьев Министрсен Кабинетне РФ Президенчĕн 2015 çулта Раççейре Литература çулталăкне ирттересси çинчен калакан указне пурнăçлассипе çыхăннă мероприятисене йĕркелеме хушнă.

Вĕренŭ министрĕ Владимир Иванов шкул пĕтерекенсем патшалăхăн пĕрлехи экзаменĕсене мĕнлерех тытнипе паллаштарнă. Вăл палăртнă тăрăх – вырăс чĕлхипе экзамена çамрăксен 98,44% ăнăçлă тытнă, 80 е ытларах балл пухнисем – 20,32% /Раççейри вăтам кăтарту – 13,26%/. Анчах тивĕçлĕ мерăсем йышăннă пулин те экзамен тытакансем, йĕркелŭçĕсем йĕркене пăснă тĕслĕхсем пулнă. Патăрьел районĕнче унашкалли уйрăмах нумай.

Чăваш Ен Пуçлăхĕн шухăшĕпе, республикăра шкул пĕтерекенсем экзаменсенче çуллен лайăх кăтартусемпе палăраççĕ, анчах ыйтусем пур: «Экзаменсен йĕркелŭ шайне ŭстермелле, должноçри çынсен яваплăхне çирĕплетмелле».

Культура министрĕ Вадим Ефимов федерацин Атăлçи округĕнче Культура çулталăкне ирттерессипе çыхăннă чи лайăх опыта палăртмалли конференцие хатĕрленни çинчен каласа панă. Çав конференци Шупашкарта çĕртме уйăхĕн 18-19-мĕшĕсенче иртмелле, унта округри мĕн пур субъект представителĕсем, РФ культура министрĕн çумĕ Алла Манилова, Патшалăх Думин Культура енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ Елена Драпеко, ыттисем хутшăнмалла.

Регионсен хушшинчи «Молгород-2014» вĕрентŭ форумĕ çинчен вĕренŭ министрĕ Владимир Иванов каласа панă. Атăл леш енче йĕркеленĕ форума 1,2 пин ытла çамрăк хутшăннă, çав шутра – Мари Эл, Пушкăртстан, Оренбург облаçĕн яш-кĕрĕмĕпе хĕрупраçĕ. Халĕ яшсемпе хĕрсем Атăлçи округĕнчи çамрăксен «iВолга» форумне кайма хатĕрленеççĕ. Вăл çĕртме уйăхĕн 18-28-мĕшĕсенче Самар облаçĕнче иртет. Темиçе смена пулать: «Эсĕ – предприниматель», «Ырăлăх технологийĕсем», «Информаци юхăмĕ», «Ман хыççăн чуп», «Политика тата студентсен хăй тытăмлăхĕ», «Ял çамрăкĕсем» тата ыт.те. Çавăн пекех çамрăксен инноваци тата социаллă проекчĕсен конкурсне йĕркелеççĕ.

Чăваш Енĕн 90 çынран тăракан делегацийĕ унта тĕрлĕ енлĕ 257 проект илсе каять. Çав шутра – Чăваш Енĕн паллă вырăнĕсемпе, наци тата культура йăли-йĕркипе паллаштараканнисем. «Проектсене тепĕр хут тĕплĕ тишкермелле, пахалăх енĕпе тивĕçтерменнисене тŭрех пăрахăçламалла», – сĕннĕ Михаил Игнатьев.

Физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников Раççей пенсионерĕсен Шупашкарта иртнĕ пĕрремĕш спартакиадин кăтартăвĕсемпе паллаштарнă.

■ К.ЯКОВЛЕВ

Акатуй

«Йывăрлăхсене çĕнтерсе малалла аталанăр!»

Çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Муркаш районĕнче пулнă, «Акатуй» уявне хутшăннă.

Районта пурăнакансене уйхирти çурхи ĕçсем вĕçленнĕ ятпа саламласа Михаил Васильевич вĕсем çĕр ĕçченĕсен тĕп тĕллевне – лайăх тыр-пул çитĕнтерессине тата ăна çухатусăр пухса кĕртессине – тивĕçлипе пурнăçланине палăртнă. «Ку чухнехи аграрии технологийĕсем производствăри чăрмавсене чакарма, экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци туса кăларма май параççĕ», – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

Çавăн пекех вăл Муркаш районĕ республикăра ăнăçлă аталанса пыракан муниципалитетсен хушшинче пулнине палăртнă. Район вăй-хăвачĕ пысăк, унта пурăнакансем ĕçчен, вĕсем республика Правительствипе тава кĕрсен хăйсен шухăшне хŭтĕлеме пĕлеççĕ. Михаил Игнатьев çирĕплетнĕ тăрăх – вак тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарни, экономикăна пысăк бизнеса явăçтарма условисем йĕркелени района малалла ăнăçлă утăмсемпе утма пулăшĕç. Çак мерăсем ĕç укçин шайне, ĕç вырăнĕсен шутне ŭстерме май парĕç. «Шансах тăратăп: мĕн пур йывăрлăха çĕнтерсе Муркашсем малалла аталанса пырĕç», – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

Районăн чи лайăх ĕçченĕсене патшалăх наградисемпе хавхалантарнă.

Нумай аччаллă çемьесене федерацин тата республикăн амăшĕн капиталĕсене илме сертификатсем панă. Хăш-пĕр çемье пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма 703 пин тенкĕ социаллă тŭлевпе тивĕçтересси çинчен свидетельствăсем илнĕ.

■ А.ВАСИЛЬЕВА

Тема тăсăмĕ – 4 стр.

Рейтинг

Чăваш Ен – Раççейре 3-мĕш

Чăваш Енĕн «Уçă кăтартусем» порталĕ регионри уçă кăтартусен рейтингĕнче Раççейре – 3-мĕш, федерацин Атăлçи округĕнче вара 1-мĕш вырăнсене йышăннă. Интернет-ресурс Раççей саккунĕсене, экспертсен тата унпа уçă куракансен ыйтăвĕсене 92,6% тивĕçтерет.

Рейтинг лидерĕ – Тула облаçĕ /100%/. Иккĕмĕш вырăнта – Волгоград облаçĕ /96,2%/. Информаци ирĕклĕхĕн фончĕн аудичĕн пĕтĕмлетĕвĕсем çапларах. Уçă кăтартусен порталĕсене «Уçă правительство» пулăшнипе 2014 çулхи ака-çу уйăхĕсенче тĕрĕсленĕ. Регионсене 74 параметрпа хаклана, вĕсенчен ытларахăшĕ уçă кăтартусен пуххисене вырнаçтарма кирлĕ самантсемпе тата ыйтнине пурнăçа кĕртнин пахалăхĕпе çыхăннă.

Чăваш Ен çĕр-шыври уçă кăтартусен пĕтĕм пуххине пичетленĕ 6 регион йышне кĕнĕ, çавăн пекех – кирлĕ пĕтĕм тема тăрăх кăтартусем вырнаçтарнă 4 регион шутне. Унсăр пуçне Чăваш Ен порталĕ пуххисене миçе хут «уçласа илнине» пăхма май панă, хирехирĕçле çыхăну йĕркеленĕ, файлсен тĕрĕс адресĕсене тата ыттине кăтартнă ресурссен йышне те /ун пекки нумаях мар/ лекнĕ.

Паянхи кун Чăваш Енĕн «Уçă кăтартусем» порталĕнче кăтартусен 116 пуххипе паллашма пулать. Ку вăл – республика пурнăçĕн тĕрлĕ сферри пирки калакан информаци: сывлăх сыхлавĕ, вĕрентŭ, экономика, ЖКХ, ĕç, экологи т.ыт.те /пĕтĕмпе 17 категори/. Тĕслĕхрен, ЧР Вĕренŭ министерстви ача сачĕсемпе шкулсем, ЧР Сывлăх сыхлавĕн министерстви больницăсемпе аптекăсем, ЧР Культура министерстви театрсемпе музейсем çинчен кăтартусем вырнаçтарнă.

Ресурса Чăваш Енĕн Геопорталĕпе çыхăнтарнă. Çапла вара унпа уçă куракан пĕр-пĕр учреждени адресне, телефон номерĕпе ĕç режимне пĕлме çеç мар, вăл ăçта вырнаçнине карттă çинче пăхма та пултарать.

Аса илтеретпĕр: уçă кăтартусемпе /вĕсене патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем тăратаççĕ/ кирек кам та усă курма пултарать, çав шутра коммерци тата урăх тĕллевсемпе те, ЭВМ программисем хатĕрлемешкĕн т.ыт.те. Чăваш Енре «Уçă кăтартусем» портала тăвас ĕçе РФ Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи «Патшалăх управленийĕн тытăмне лайăхлатмалли тĕп çулĕр çинчен» 601 №-лĕ указне пурнăçлас тесе пуçăннă. Портал 2013 çул вĕçĕнче хута кайнă. Шăпах çак вăхăт тĕлне Чăваш Енĕн ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем асăннă ресурс уйрăмĕсене тултарас-пуянлатас ĕçе вĕçленĕ. Унтанпа Чăваш Енĕн «Уçă кăтартусем» порталне 27,5 пин хут кĕрсе пăхнă, кăтартусен пуххисене 559 хут «уçласа илнĕ».

Ирина НИКОЛАЕВА.

Паха опыта палăртма – конференци

Çĕртме уйăхĕн 18-19-мĕшĕсенче Шупашкар хулинче федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен паха опытне палăртас тата сарас енĕпе конференци пулать. Ăна Раççей Федерацийĕн Культура министерстви РФ Президенчĕн 2013 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнчи «Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкне ирттересси çинчен» йышăннă 375-мĕш указне пурнăçласа ирттерет.

Конференцие Раççейри Культура çулталăкĕнче регионсенчи пуçарусемпе проектсене пурнăçламалли опытпа паллаштарас, çивĕч ыйтусене тата вĕсене татса памалли çулсене тупса палăртас тĕллевпе йĕркеленĕ. Федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсен культура тытăмĕнчи ĕç тăвакан влаç органĕсен ертŭçисен докладĕсене итлеме палăртнă. Çавăн пекех программăпа килĕшŭллĕн «çавра сĕтелсем» ирттерме, Шупашкар хулинчи культура учрежденийĕсенче пулма, округри субъектсенчи культурăпа искусствăн чи лайăх ĕçченĕсене Раççей Федерацийĕн Культура министерствин Хисеп грамотисемпе наградăлама пăхнă.

Конференцие РФ Культура министерствин, Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи Представительствин ертŭçисем, РФ Федераци Пухăвĕн палатисен членĕсем, культурăпа искусство ĕçченĕсем, округри культура учрежденийĕсене ертсе пыракансем, МИХсенче ĕçлекенсем хутшăнаççĕ.

■ А.КУЗНЕЦОВА

Интернат ачисен конкурсĕ

Çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Ен делегацийĕ федерацин Атăлçи округĕн «Ачалăх çăлтăрĕсем» ача-пăча пултарулăх конкурсне хутшăннă.

Çак мероприятие ашшĕ-амăшĕн хŭтлĕхĕсĕр юлнисем валли ятарласа йĕркелеççĕ. Конкурсăн республикăри тапхăрне кăçал 3 ача çуртĕнчен тата 7 интернат шкултан пурĕ 100 воспитанник хутшăннă. Гала-концерта кайма вара Çĕмĕрлери «Елочка» тата Пăрачкаври И. Н. Ульянов ячĕллĕ ача çурчĕсенчи пултаруллă ачасем тивĕçнĕ.

Çамрăк талантсене тĕрлĕ номинацире хаклана: «Вокал», «Ташă», «Илемлĕ сăмах», «Хăйне евĕр жанр». Аса илтеретпĕр: асăннă конкурс федерацин Атăлçи округĕн «Ачалăха тавăрма» общество проекчĕпе килĕшŭллĕн иртет. «Атăлçи спорт Олимпĕ», «Ăс-тăн палати» йышши программăсемпе пĕрле вăл ашшĕ-амăшĕн хŭтлĕхĕсĕр çитĕнекен ачасемшĕн тĕрлĕ сферăри «социаллă лифт» пулса тăрать.

Ирина ПУШКИНА.

"Хыпар" Издательство çурчĕн мĕн пур кăларăмне Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ: "Хыпар" – 744 тенкĕ те 12 пус. "Хыпар" – шăмат кун" – 321 тенкĕ те 96 пус. Çавăн пекех пирĕн кăларăмсене "Чăваш пичет", "Советская Чувашия" киоскĕсенче тата редакцире çырăнма пулать.

Правительствăра

Тăкаксем виçеллĕ пулччăр

Министрсен Кабинечĕн иртнĕ юн кунхи ларăвне уçнă май республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев бюджет политикин тĕп çул-йĕрĕсем çинчен калакан указа алă пусни çинчен пĕлтерчĕ. Унта аталану тĕллевĕсемпе пĕрлех пиçиххине туртарах çыхмалли самантсене те палăртнă.

Бюджетăн финанс çирĕплĕхне тивĕçтермелле, çĕнĕ предприятисем уçма, инфратытăма аталантарма меллĕ условисем йĕркелемелле, инвестицисене хавхалантармалла тата ыт.те. Республикăн хăйĕн тупăшĕн калăпăшне ŭстерес тĕлĕшпе указра уйрăм çынсен куçми пурлăхĕнчен тата организацисен пурлăхĕнчен илекен налуксем енĕпе тимлĕ пулмаллине палăртнă. Çав вăхăтрах бюджет тăкакĕсене виçеллĕ тăвас енĕпе те ĕçлемелле. Çав шутра – патшалăх служащийĕсен шутне чакарса. Документра йыша чакарассин пайăр кăтартăвĕсене асăнман, анчах указ пирки комментари панă май Михаил Васильевич сывхартнă цифрăна пĕлтерчĕ – 10%: «Компактлă аппарат йĕркелемелле».

Пĕрлех чиновниксене ĕçшĕн хавхалантарас енĕпе ыйтусем çинчен те каларĕ. М.Игнатьев чиновниксен ĕç укçине ŭстернĕшĕн хăйне хăшĕсем критикленине те пытармарĕ, анчах унсăрăн май çук: квалификациллĕ менеджерсем, управленецсем кирлĕ – шалу тивĕçтермесен вĕсем патшалăх службине килесси иккĕленŭллĕ.

Ларăвăн кун йĕркинче пĕтĕмпе те сакăр ыйту кăна пулчĕ. Министрсен Кабинечĕ кашнинчех 20-30 ыйту тишкерекенччĕ те – çакнашкал кĕске кун йĕрки журналистсене кăштах тĕлĕнтерчĕ те. Çавна май каласу та вăраха пымарĕ.

Раççейрен депортацилемелли ют çĕр-шыв гражданĕсене усрамалли ятарлă учреждени çинчен калакан саккуна пăрахăçлас ыйту тавлаштармарĕ. Вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова пĕлтернĕ тăрăх – асăннă çынсемпе ĕçлессипе çыхăннă полномочисене Федерацин миграци службине панă, çавна май халь хамăрăн саккун та кирлĕ мар.

Машиностроении инновацисене прототиплакан центр валли субсиди уйăрмалли правилăсене çирĕплетрĕç. Ун валли хушма оборудовани туянма укçа кирлĕ. Ăна уйăрма хирĕçлемерĕç-ха, çапах М.Игнатьев хăш-пĕр фирма центр пулăшăвĕпе усă курнă хыççăн хăйĕн обязательствисене пурнăçламаннине аса илтерчĕ. Иван Моторин премьер та асăрхаттарчĕ: центрăн тăкаксене хăй тĕллĕн саплаштармалли шая çĕкленмелле. Патшалăх Канашĕн вице-спикерĕн Олег Мешковăн та ыйту çуралчĕ – вăл центр ĕçлекен проектсене, унăн укçипе усă курнă фирмăсене асăнма ыйтрĕ. Экономика министрĕ Владимир Аврелькин курăмлă темиçе проект пирки каларĕ те – урăх никамах та чăркăшланмарĕ.

Ял хуçалăх тĕллевĕллĕ çĕр лаптăкĕсене ытти тĕллев валли куçарасси те кăштах калаçтарчĕ. Пурлăх министрĕ Анатолий Кузьмин калаçăва иккĕленŭсĕр-мĕнсĕр пуçларĕ-ха: республикăн темиçе районĕнче пĕтĕмпе 30 ытла гектара çулсем, вĕсемпе çыхăннă сервис, кĕпер валли куçармалла. Ăна парламентăн тепĕр вице-спикерĕ, Анатолий Князев, «такăнтарчĕ»: Шупашкар районĕнчи Апаш ял тăрăхĕнче çул валли 38 лаптăка куçараççĕ – мĕншĕн апла вакласа пĕтернĕ? «Районтан çавнашкал кăтартусем панă та...» – теме пăхни А.Кузьмина тŭрре кăлараймарĕ, ЧР Пуçлăхĕ ăна «уçămлă хурав параймарăр» тесе ŭпкелерĕ.

Хуçасăр-килсĕр чĕр чунсен шутне йĕркелесе пымалли мероприятисемпе çыхăннă мерăсем çинчен ЧР Патшалăх ветеринари службин ертŭçи Сергей Скворцов каласа пачĕ. Ку енĕпе çĕр-шывра пĕтĕмĕшле документ çук, çавăнпа республика шайĕнче тивĕçлĕ йышăну тăвас тенĕ. Унта хуçасăр йытă-кушака тытассине камсем йĕркелессине те, чĕр чунсемпе малашне мĕн тăвассине те уçămлă палăртнă. Хăшĕсен хуçисем пулсан вара? Ку самантсене те шута илнĕ: калăпăр, йытă мăйкăчлă тăк е унăн хуçи пуррине кăтартакан ытти паллă пулсан вĕсен хуçисене полици шырĕ. «Кирлĕ мар хирĕçŭллĕ тĕслĕхсем ан пулччăр – документ чи малтанах çакăн валли кирлĕ», – пĕтĕмлетрĕ М.Игнатьев.

Тŭлевсĕр юридици пулăшăвĕпе усă куракан категорисен шутне ŭстересси пирки юстици министрĕ Надежда Прокопьева пĕлтерчĕ. Халĕччен категорисен йышне тата иккĕ хушăнать: Социализм Ĕçĕн Геройĕсем тата тĕрме-колонирен тин çеç тухнисем. Сăмах май, кăçалхи пилĕк уйăхра республикăра çак çăмăллăхпа усă куракансем адвокатсенчен 750 хут тŭлевсĕр пулăшу илнĕ. ЧР Пуçлăхĕ пĕр самант çинче чарăнса тăчĕ: нумай хут хатĕрлемелле /пулăшу граждансемшĕн тŭлевсĕр, анчах адвокатсем тŭлев илеççĕ – патшалăх тŭлет, çакăн валли тивĕçлĕ хутсем кирлĕ/ – çавăнпа адвокатсем ку ĕçпе аппаланасшăнах мар иккен. Михаил Васильевич çакна шута илме сĕнчĕ. Пулăшупа усă куракансен категорийĕсем нумайланни вара, Этем прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй Юрий Кручинин палăртнă тăрăх, бюджет тăкакĕсене нумай ŭстерместĕр: çапла, юсанмалли учрежденисенчен тухакан чылай, анчах Ĕç Геройĕсем Чăваш Енре йышлă мар.

■ Николай КОНОВАЛОВ

Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать, кăштах çумăр çукалать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 17, çĕрле 11 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 749 мм, сывлăшри нŭрĕк 46 процент.

Кун тăршшĕ 17 сехет те 38 минут.

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çăвать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, çĕрле 11 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 746 мм, сывлăшри нŭрĕк 51 процент.

Кун тăршшĕ 17 сехет те 39 минут.

Уяв

ЧР Патшалăх Канашĕ – 20 çулта

Çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче, Раççей кунĕ умĕн, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче ЧР Патшалăх Канашĕ 20 çул тултарнине халалласа савăнăçлă мероприяти иртрĕ.

Çын йышлă пухăнчĕ: ЧР Патшалăх Канашĕн пилĕк суйлаври, çавăн пекех Чăваш АССР Аслă Канашĕн, РФ Патшалăх Думин депутачĕсем, сумлă хăнасем... Театр фойинче – парламент историйĕпе паллаштаракан курав, фотопрезентаци. Савăнăçлă мероприяти те ЧР Патшалăх Канашĕн кун-çулне "йĕрлекен" сюжетпа пуçланчĕ. Чăваш Енĕн çĕнĕ тапхăрти парламенчĕн çуралнă кунĕ – 1994 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕ, шăпах çавăн чухне унăн пĕрремĕш сессийĕ иртнĕ. Унтанпа пĕтĕмпе 183 лару йĕркеленĕ, вĕсенче 2953 ыйту, çав шутра 1300 саккун проекчĕ, пăхса тухнă, паянхи кун тĕлне 1146-тика тăрăмĕ тата çĕр-шыва тытса пырассин йĕрки улшăннă, анчах парламентарисен статусĕпе тивĕçĕсем çавах юлнă: патшалăх тытăмне саккунсемпе тивĕçтересси, граждансен пурнăçне, çавăн пекех хуçалăх субъекчĕсен ĕç-хĕлне право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăрасси", – терĕ ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов. Вăл депутатсем экономикăна тăнăçлă аталанма, çынсен пурнăçĕн пахалăхне лайăхлатма, вĕсен интересĕсене хŭтĕлеме пулăшакан саккунсем йышăнма тăрăшнине палăртрĕ. ЧР Патшалăх Канашĕ республика влаçĕн пĕтĕм органĕпе килĕштерсе

шне алă пуснă тата МИХсем урлă халăх патне çитернĕ. Парламентарисем РФ Патшалăх Думине темиçе пуçарупа тухнă. Унсăр пуçне депутатсем республикăра тĕрлĕ мероприяти йĕркелесе ирттереççĕ, вĕсене тата Раççей шайĕнчисене хутшăнаççĕ.

"Вăхăт иртнĕçемĕн политика тăрăмĕ тата çĕр-шыва тытса пырассин йĕрки улшăннă, анчах парламентарисен статусĕпе тивĕçĕсем çавах юлнă: патшалăх тытăмне саккунсемпе тивĕçтересси, граждансен пурнăçне, çавăн пекех хуçалăх субъекчĕсен ĕç-хĕлне право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăрасси", – терĕ ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов. Вăл депутатсем экономикăна тăнăçлă аталанма, çынсен пурнăçĕн пахалăхне лайăхлатма, вĕсен интересĕсене хŭтĕлеме пулăшакан саккунсем йышăнма тăрăшнине палăртрĕ. ЧР Патшалăх Канашĕ республика влаçĕн пĕтĕм органĕпе килĕштерсе çĕлет. Унсăр пуçне Раççей регионĕсен саккун кăларакан органĕсемпе çыхăнса ĕçлес тĕлĕшпе 17 килĕшŭ тунă.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев парламентарисене паллă пулăм ячĕпе саламланă май пирĕн депутатсен ĕç опычĕпе Раççейĕн ытти регионĕнче тата федерацине ăнăçлă тивĕçтереççĕ", – терĕ Михаил Игнатьев. Вăл Чăваш Енĕн "Уçă кăтартусем" порталĕ регионри уçă кăтартусен рейтингĕнче Раççейре – 3-мĕш, федерацин Атăлçи округĕнче вара 1-мĕш вырăн йышăннине пĕлтерчĕ. Депутатсем тата халăх ыйтнипе ЧР Правительствин ларăвĕсене кăçалтанпа Интернет сетĕнче онлайн режимĕпе трансляцилеме пуçланине, çавна май вĕсене кирек кам та пăхма пултарнине аса илтерчĕ.

"Паллах, йышăнакан саккунсем юридици тĕлĕшĕнчен кăлтăксăр тата практикăра усă курмашкăн меллĕ пулмалла. Çапах та чи кирли – вĕсем кăмăл-сипет тата этемлĕх пахалăхĕсем çинче никĕсленччĕр, çынсен прависемпе ирĕклĕхне хŭтĕлеччĕр", – палăртрĕ республика Пуçлăхĕ. Унтан вăл саккунсем кăларас ĕçе хастар хутшăннă депутатсен пĕр йышне "Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн" орден медалĕпе тата Чăваш Республикин Хисеп грамотипе наградăларĕ.

Уявра награда, салам нумай пулчĕ. Депутатсене ЧР Патшалăх Канашĕ 20 çул тултарнă ятпа саламласа РФ Правительствин Председателĕ Дмитрий Медведев, РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕпе Патшалăх Думин Председателĕсем Валентина Матвиенкăпа Сергей Нарышкин, РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич тата ыттисем телеграмма янă. Парламентарисене Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕн, СССР космонавт летчикĕн Андриян Николаевăн хĕрĕ Елена Николаева-Терешкова */сăн ŭкерчĕкре/* малашне те хальхи пекех хастар та пуçаруллă ĕçлеме ăнăçу сунчĕ. Тĕрлĕ суйлаври депутатсем иртнĕ вăхăта аса илчĕç, Чăваш Республикин Конституцине йышăннă тапхăр чи яваплисенчен пĕри пулнине палăртрĕç.

Уявра "ЧР Патшалăх Канашĕ – 20 çулта" конкурсра çĕнтернĕ журналистсене те чысларĕç. Вĕсен хушшинче çак йĕркесен авторĕ те пур. Мероприяти концертпа вĕçленчĕ.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ŭкерчĕкĕсем

Раççей кунĕ ячĕпе

Çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев "Шупашкар: 500 çул" культурăпа кану паркĕнче Раççей кунне халалланă уява хутшăннă. Унта çавăн пекех ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ Вадим Ефимов, Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов пулнă.

Михаил Игнатьев хулара пурăнакансемпе хăнасене саламланă май Раççей кунĕ патшалăхăн наци уявĕ пулнине, вăл пирĕн çĕр-шыв аталанăвĕнчи çĕнĕ тапхăра палăртнине каланă. "Эпир йăлайĕркене сума сăватпăр, Раççейĕн нумай ĕмĕре пыракан хăйне евĕрлĕ культурине упратпăр. Паян обществăпа политика лару-тăрăвĕ Раççей Федерацийĕн кашни гражданинне, кашни çемьене ыранхи куна шанчăкпа кĕтме май парать", – тенĕ вăл.

Михаил Игнатьевпа Леонид Черкесов Шупашкар çамрăкĕсене вĕсен пĕрремĕш документне – Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспортне – панă.

Раççей кунĕ ячĕпе Шупашкар хулин пĕрлештернĕ хорĕ Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ, Раççей халăх артисчĕ, Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ Морис Яклашкин ертсе пынипе Раççей тата Чăваш Ен гимнĕсене, патриот юррисене шăрантарнă.

Уявра тĕп хулари музыка коллективĕсем те пултарулăхĕпе савăнтарнă.

■ **И.НИКОЛАЕВА**

Автоэкспедицие хутшăнакансемпе тĕл пулнă

Çĕртме уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «Раççей» автоэкспедицие хутшăнакансемпе тĕл пулнă. Ăна паллă çул çŭревçĕ тата блогер Сергей Доля ертсе пырать. Тĕл пулăва çавăн пекех Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – республика Пуçлăхĕн Администрацийĕн Ертŭçи Александр Иванов, информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева, Шупашкар хулин пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăннă.

Проектăн тĕп тĕллевĕ – Раççейĕн паллă вырăнĕсемпе историйĕ çинчен каласа кăтартасси, шалти туризма сарма пулăшасси, Интернетпа усă куракансем тата Рунет тулашĕнчи аудитори патне çак шухăша çитересси: «Раççей тăрăх çул çŭресси кăсăклă та çăмăл».

Сергей Доля Чăваш Енри лару-тăру лайăх, Шупашкар таса та тирпейлĕ, унта пурăнакансем ырă кăмăллă пулнине палăртнă. Çул çŭревçĕ пĕлтернĕ тăрăх – кирек ăçта тĕл пулсан та Шупашкарсем хăйсен хулипе мăнаçланаççĕ, ăна пурăнмашкăн чи лайăх кĕтес вырăнне хураççĕ.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ хăнасене республикăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕ, унăн спортри, сывлăх сыхлавĕнчи, вĕренŭри, культурăри, пурнăçăн ытти сферинчи çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартнă. Влаç органĕсен тĕп тĕллевĕ – регионти пурнăç пахалăхне ŭстересси, вак тата вăтам предпринимательлĕхе аталантарма ăнăçлă условисем йĕркелесси, инвестицисем явăçтарасси.

Экспедицие хутшăнакансем наци культурипе тата чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе тĕплĕнрех паллашма кăмăл тунине пĕлтернĕ.

■ **А.ЛЬВОВА**

Чыслав

Чун ăшшине парнелеççĕ

Çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче социаллă тытăм ĕçченĕсем хăйсен професси уявне паллă турĕç. Асăннă мероприятие çак сферăра тăрăшакан ведомствăсен – ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин, РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн, РФ Социаллă страховани фончĕн регион уйрăмĕн, Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин, Медицинăпа социаллă экспертизăн республикăри тĕп бюровĕн представителĕсем пухăнчĕç.

Социаллă ĕçчен кунне уявламашкăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, Раççей Федераци Канашĕн Социаллă политика енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕ, "Раççей пенсионерĕсен союзĕ" общество организацийĕн Тĕп правленийĕн президиумĕн председателĕ Валерий Рязанский хутшăнчĕç.

"Хевтесĕрсене – тăлăх ачасене, сусăрсене, тивĕçлĕ канăва тухнисене, ветерансене, çавăн пекех нушана кĕрсе ŭкнĕ граждансене – йывăр самантра пулăшмашкăн чи малтан эсир васкатăр, вĕсемшĕн чунăр ăшшине шеллеместĕр. Халĕ авă Украинăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен тухса килме тивнисене пĕрлехи вăйпа хŭтĕлетпĕр, – терĕ Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова савăнăçлă мероприятие уçнă май. – Паян Шупашкарта Раççей пенсионерĕсен Пĕрремĕш спартакиади – ŭсĕме пăхмасăр яланах малалла талпăнакансен, ăнтăлакансен спорт уявĕ – пуçланчĕ. Тĕрĕссипе, çак куншенче пирĕн хутлăхра пĕтĕм çĕр-шывăмăр хăнара тесен те йăнăш мар. Халĕ те вĕсемпе юнашар эсир, социаллă ĕçченсем. Тавах пуян чунăрсемшĕн, хăвăр ĕçĕре куллен чыслăн пурнăçласа пынăшăн".

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – республикăра пурăнакан кашни гражданинăн социаллăх тĕлĕшĕнчи тăнăçлăхне лайăхлатассишĕн социаллă ĕçченсем явапла. "Ырă сăмахăрсемпе йывăрлăха кĕрсе ŭкнĕ çынна хавхалантарса вăй-хал паратăр, унăн чунĕнче шанчăк хĕлхемне чĕртетĕр. Тавах пархатарлă ĕçĕршĕн", – терĕ вăл. Михаил Игнатьев отраслĕн чи пултаруллă хастарĕсене патшалăх наградисемпе чысларĕ: Елена Павлова /Шупашкар хули/ "Чăваш Республикин халăха социаллă хŭтлĕх паракан чи лайăх ĕçчен" хисеплĕ ята, Татьяна Мусакова тата Ольга Полунина /Пенси фончĕн Шупашкар хулинчи управленийĕ/, Николай Семенов /Сĕнтĕрвăрри районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр/ республика Пуçлăхĕн Тавне тивĕçрĕç.

Раççей Федерацийĕн Ĕç тата социаллă хŭтлĕх министерствин Хисеп хучĕпе Елена Ивановăна /Çĕрпŭ районĕнчи социаллă хŭтлĕх пайĕ/, Елена Шашкаровăна /Çĕнĕ Шупашкар хулинчи социаллă центр/, Елена Яковлевăна /Калининăри психоневрологи интерначĕ/, Марина Галкинăна /Çĕнĕ Шупашкар хулинчи ĕçпе тивĕçтерекен центр/, Зульфия Салахутдиновăна /Етĕрне районĕнчи ĕçпе тивĕçтерекен центр/ сумларĕç.

Уявра çавăн пекех професси ăсталăхĕн республикăри конкурсне пĕтĕмлетрĕç, çĕнтерŭçĕсене ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин дипломĕсемпе наградăларĕç.

"Раççей пенсионерĕсен союзĕн" председателĕ Валерий Рязанский социаллă тытăм хастарĕсене Раççей пенсионерĕсен Пĕрремĕш спартакиадине хатĕрленсе ирттерме пуçаруллă хутшăннăшăн тав турĕ. "Манăн шухăшăмпа – "халăха упрасси" ăнлав социаллă политикăн тĕп шăнăрĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл кашни çыннăн пурнăçĕшĕн, вăрăм ĕмĕршĕн, телейлĕ ватлăхшăн кĕрешессине тĕпе хурать, – терĕ Валерий Владимирович. – Эсир вара пирĕн чи хаклă тивĕçлĕхе – ырăлăха – халăх патне çитеретĕр".

Уява чăваш эстрадин артисчĕсен концерчĕ илем кŭчĕ. Мускаври хореографи пултарулăхĕн центрĕ пысăк парне хатĕрленĕ, вăл 3D курăмлă "Юрату ташши" шоупа савăнтарчĕ.

■ **Валентина СМИРНОВА**

Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнчи 83-мĕш указĕпе килĕшŭллĕн саккунсем кăларас ĕçри хастарлăхшăн тата нумай çул тŭрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Волгостальконструкция» тулли мар яваплă обществăн генеральнăй директорне, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне **Олег Александрович ДЕЛЬМАНА,** Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председательне **Петр Степанович КРАСНОВА** тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Социаллă политика тата наци ыйтăвĕсемпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн çумне **Игорь Анатольевич КУШЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе;

Адвокатсен Чăваш наци коллегийĕн председательне, адвоката, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне **Виктор Алексеевич ИЛЬИНА** тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Аппарачĕн ертŭçине **Анатолий Ильич УХТИЯРОВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă.

* * *

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнчи 85-мĕш указĕпе килĕшŭллĕн Чăваш Республикин аталанăвĕшĕн нумай çул тŭрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин вĕренŭ тата çамрăксен политикин министрĕн пĕрремĕш çумне **Светлана Владимировна ПЕТРОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе наградăланă;

вырăнти хăй тытăмлăха аталантарма тунă пархатарлă ĕçсемшĕн тата нумай çул тŭрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхне **Леонид Григорьевич НИКОЛАЕВА** тата Муркаш район администрацийĕн пуçлăхне **Ростислав Николаевич ТИМОФЕЕВА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

ял хуçалăхĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тŭрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» сăнавпа кăтарту хуçалăхĕ» колхозăн механизаторне **Анатолий Михайлович БАКЛАНОВА,** «Батыревский» акционерсен хупă обществин тракторист-машинистне **Юрий Александрович ОСИПОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ МЕХАНИЗАТОРĔ»** хисеплĕ ят;

педагогика тата воспитани парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Патăрьел районĕнчи «Шăнкăртамри Э.З.Феизов профессор ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлŭ паракан вăтам шкул» муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлŭ паракан бюджет учрежденийĕн вĕрентекенне **Сания Мевлетовна ИШМУРАТОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ УЧИТЕЛĔ»** хисеплĕ ят;

саккунлăха çирĕплетес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Аслă судĕн судийине **Александр Васильевич АКИМОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЮРИСЧĔ»** хисеплĕ ят панă;

вырăнти хăй тытăмлăх аталанăвне пысăк тŭпе хывнăшăн тата нумай çул тŭрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Етĕрне район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхне **Валентина Александровна ОБЛИНОВĂНА** тата Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн социаллă аталану енĕпе ĕçлекен çумне – йĕркелŭпе кадр, право тивĕçтерĕвĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхне **Лилия Юрьевна ТАРАСОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНĔСЕНЧЕ ТŬРĔ КĂМĂЛПА ĔÇЛЕНĔШĔН»** Мухтав паллипе наградăланă.

Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ

Пурнăçпа çыхăннă ăнлав

Культура çулталăкĕ пирĕншĕн – этика шайне, илем туйăмне çĕклеме пулăшакан май çеç мар, пурнăç йĕркине пуянлатакан самант та. Культура тесен чи малтанах юрă-ташă, сăвă-кулă аса килет. Çакă çеç мар тесшĕн, культура ăнлав – питĕ анлă, пуян. Вăл пирĕн кулленхи пурнăçпа та тачă çыхăннă. Хамăра мĕнле тытатпăр, мĕнле калаçатпăр, йăла-йĕркене мĕнле пурнăçлатпăр – пĕтĕмпех пирĕн культура шайне уçса парать.

Çĕртме уйăхĕнче Культура çулталăкне халаллана мероприяти чылай пулĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, Республика кунĕпе çыхăннисем. Кăçал çак уява Шупашкарсемсĕр пуçне Комсомольскисем те йышăнĕç. Каçал тăрăхĕнче хăнасене тивĕçлĕ шайра йышăнасшăн. Çапла пултăр тесе çине тăрса ĕçлеççĕ. Суркуннене тухнăранпах район администрацийĕ, организацисемпе предприятисем салана уяв сăнĕ кĕртес тесе тăрăшаççĕ.

Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче районта темиçе объект хута кайĕ: Киров поселокĕнчи фельдшер-акушер пункчĕ; тăлăх ачасемпе авариллĕ çуртсенчен куçсакансем валли виçĕ хутлă çурт; выльăх-чĕрлĕх ферми; суту-илĕвĕн икĕ центрĕ.

Культура мероприятийĕсен программи те питĕ анлă. Ял тăрăхĕсен пултарулăх коллективĕсемпе "Раççей çăл куçĕсем" фестивале хутшăнакансем юрăташăпа савăнтарĕç.

"Каçал" Чĕмпĕрте

Каçал хутлăхĕнче пурăнакансене чăннипех мухтамалла. Кăçал Республика кунне хăйсем патĕнче йышăннисĕр пуçне ытти вырăна тухса çŭреме те мехел çитереççĕ. Акă "Каçал" фольклор ансамбльнех илер. Культура çулталăкĕнче тухăçлă ĕçлет вăл. Чăваш наци конгресĕн ертŭлĕхĕн йыхравĕпе нумаях пулмасть Чĕмпĕре çитсе килнĕ, унти чăвашсем ирттерекен çирĕм пиллĕкмĕш Акатуя хутшăннă.

Кŭршĕри йăхташсем те Культура çулталăкĕнче правурлăхпа палăрнă. Уяв кĕрекине çавăн пекех Самар облаçĕнчи, Тутар, Мари, Мордва республикисенчи ентешсен пултарулăх коллективĕсем пуçтарăннă. Мероприятисем хулари Çĕнтерŭ паркĕнче иртнĕ.

Акатуя пынисене Чĕмпĕр облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Сергей Морозов, облаçри чăвашсен наци культура автономийĕн председателĕ Владимир Сваев, Чăваш наци конгресĕн президенчĕ Николай Угаслов саламланă.

Африкăна çитсе курар-и?



Чăваш кĕнеке издательстви Культура çулталăкĕнче çамрăк вулавçăсене чăннипех савăнтарасшăн: вĕсем валли кĕнеке хыççăн кĕнеке пичетлет.

Акă çак куншенче шăпăрлансем валли тепĕр кăларăм – Михаил Васильевăн "В Африку!" – кун çути курчĕ. Кĕнекере зоопаркра пурăнакан тĕрлĕ чĕр чун пирки каласа кăтартнă. Çакскерсен каникула Африкăра ирттерес килсе кайнă. Анчах унта мĕнле çитмелле? Çак тĕллевпе виçĕ упăте çула тухнă. Мĕн кăна тŭсме тивмен пулĕ вĕсене çул çинче, çапла пулин те хăюллăскерсем ума лартнă тĕллеве пурнăçланă.

Повеç ачасене килĕшессе шанас килет: ăна çăмăл чĕлхепе çырнă, Т.И.Немцева, М.Ю.Николаев художниксем кăсăк ŭкерчĕксемпе илемлетнĕ.

Чиркŭ – 280 çулта

Культура çулталăкĕнче шăпах çак пулăма паллă тунă Çĕрпŭ хулинчи Çеттуй Троица чиркĕвне çŭрекенсем. Чиркĕве йĕркеленĕренпе 280 çул çитнипе çыхăннă мероприятие /вăл çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче иртнĕ/ сумлă хăнасем – Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ Варнава, виççĕмĕш округăн благочиннăйĕ Гурий архимандрит, район пуçлăхĕ Татьяна Кузьмина, район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов, хула пуçлăхĕ Вадим Николаев тата ытти – хутшăннă.

Паллă кун ячĕпе уяв концерчĕ иртнĕ. Унта Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче вĕренекенсем, Сăнав поселокĕнчи "Ватăлман чĕресем" ансамбль, халăх инструменчĕсен оркестрĕ тата ветерансен хорĕ хутшăннă.

"Сармантей" фестивальте палăрчĕ

Республикăра Культура çулталăкĕнче ача-пăча пултарулăхĕ енĕпе тимлĕ ĕçленине палăртмалла. Хальхинче пĕр проект çинчен асăнса хăварасшăн. Сăмах ачасен ŭнер пултарулăхĕпе çыхăннă марафон пирки. Вăл кăçалхи нарăс уйăхĕнче старт илчĕ, республикăн пур районĕпе хулинче иртрĕ, темиçе конкурспа фестивале – "Черчен чечексем", "Уçă саслă ачалăх", "Пĕчĕк çеç путене", "Сывă-и, тĕнче!", "Çĕр пин тĕрĕ çĕр-шывĕнче" – пĕрлештерчĕ. Çĕнтерŭçĕсене нумаях пулмасть Культурăпа халăх пултарулăхĕн республика керменĕн Аслă заленче чысларĕç.

Асăннă мероприятисене Елчĕк районĕнчи Лаш Таяпа ял тăрăхĕнчи çамрăк артистсем те хутшăнчĕç. Сăмахран, Яманчŭрелти культура çурчĕ çуменчи "Сармантей" фольклор коллективĕ виççĕмĕш степень диплома тивĕçрĕ. Лиза Казначеева сăвă вулакансен конкурсĕнче иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Надежда СМИРНОВА хатĕрленĕ.

Чăваш Енре – Культура çулталăкĕ

Аван-и, тăванăм?
Хушма кăларăм
ЧĂВАШ ТĔНЧИ

Ас тăвăм

Вилĕмсĕрлĕхе ярса пуснă ентешсем...

Утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче Гродно хулине нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнăранпа 70 çул çитет. Истори пĕлтерĕшлĕ çак пулăмра пирĕн ентешсен Н.Волковпа В.Шапошниковăн тĕпи те пур. Гестаповецсем вĕсене тăватă юлташĕпе пĕрле 1942 çулхи нарăс уйăхĕнче чылай вăхăт асаплантарнă хыççăн персе пăрахнă.

● *Н.Волков тата В.Шапошникова, 1932 çул.*

...Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă кун Николай Волков Беларуçри Гродно хулинче пулнă. Кунта вăл çемйине Белосток хулине куçарса каяс тĕллевпе килнĕ. Анчах ĕлкĕреймен. Хулана нимĕç фашисчĕсем ярса илнĕ.

Н.Волков тăшмана хăвăрт парăнтарма май килес çуккине, Хĕрлĕ Çар чакни вăхăтлăха кăна пулнине, çĕнтерĕве сывхартма фашист тылĕнче те çапăçмаллине, çулталăк çурă каялла кăна Совет Союзĕн пулса тăнă хулара оккупантсене хирĕç тăма йывăррине аван ăнланнă. Малтанхи вăхăтра оккупаци влаçĕ Волковпа кăсăкланман-ха, мĕншĕн тесен вăл хулара сайра хутра кăна пулнă. Çĕнĕ документсем туса нимĕçсем патне ĕçе вырнаçнă вăл. Хĕрлĕ Çар командирĕн алă усса ларма юраманнине чухланăран тăшманпа унăн тылĕнче çапăçма хатĕрленнĕ. Н.Волков подпольщиксен ушкăнне пухма пуçланă.

Гродно хулинчи подпольщиксем хăйсен ĕçне тытăкăна лекнĕ совет салтакĕсене тата еврейсене пулăшнинчен пуçланă. Вĕсене апат-çимĕçпе, тумтирпе, Н.Волковăн мăшăрĕ В.Шапошникова тупса панă эмелсемпе тивĕçтернĕ. Варвара Васильевна лагерьсене аманнисене, чирлисене сиплеме те çӳренĕ. Больницăра тухтăрта ĕçленĕ май чирлĕ ачисемпе пынă амăшĕсене Хĕрлĕ Çар чакни вăхăтлăх пулнине, Беларуç çĕрĕ каллех ирĕклĕ пулассине каласа ăнлантарма тăрăшнă.

Академи урамĕнче Вагнер çемйи пурăннă. Вĕсене çĕнĕ влаç килте радиоприемник тытма ирĕк панă. Кунта пухăнса подпольщиксем Совинформбюро хыпарĕсене итленĕ. Фронт хыпарĕсене листовкăсем çине куçарса халăхра сарнă. Вăрттăн ушкăн диверси ĕçне те туса пынă. Н.Волков сĕннипе А.Калинина нимĕç чаçĕн штабне тирпейлӳçĕне вырнаçнă. Николай Алексеевич Хĕрлĕ Çар чаçĕ Гроднăран васкаса тухса кайнă май пытарса хăварнă вăрттăн документсене тупма хушнă. Александра Гавриловна задание тивĕçлĕ пурнăçланă. Каярахпа харсăр хĕрарăм тăшманăн совет салтакĕн тумĕсене тиенĕ икĕ автомашинăна сирпĕтсе янă. Тытăкăна лекнĕ салтаксен лагерĕсенчен пĕринче пăлхав çĕклеме хатĕрленнĕ. Унта çĕтĕк-çатăкпа чĕркесе хĕçпăшал та ăсатнă, анчах "тавара" хурал ярса тытнă.

Н.Волков оккупантсемпе кĕрешмелли чи тухăçлă меслет партизансен ушкăнĕсене йĕркелени тесе шухăшланă. Çакă сахал йышпа самай вăйлă тăшмана тĕп тума май панă. Тĕллеве пурнăçлама вăл хула сывăхĕнчи ялсене тухса кайнă. Хăйне хресченсем патĕнче ĕçлекен пек кăтартнă. Çав вăхăтра таврари лару-тăрăва тĕпчесе, сăнаса пĕлме тăрăшнă. 1942 çулхи кăрлач уйăхĕ тĕлне ушкăнра 20 çын пухăннă. Çулла тата кĕркунне хаяр çапăçусем пынă вырăнсенче хĕç-пăшал пухнă, нимĕçсен çăвинчен инçех мар вăрманта пытарса усранă. Командир хĕллехи шартлама сивĕсенче партизансене пач хатĕрленмесĕр тăшмана хирĕç тăма йывăр пулассине аван ăнланнă.

Çав вăхăт тĕлнелле оккупацири хулара патриотсен пурнăçĕ самай йывăрланнă. Вермахт Мускав çывăхĕнче шар курнă хыççăн Гроднăри гестапо фашизмпа килĕшменнисене хирĕç вăрçă пуçарнă. Иккĕленӳ çуратакан çынсене урамрах тыта-тыта хупнă. Гестапо çурчĕн путвалĕнчен асапланакансен чуна витерекен сассисем илтĕннĕ. Немировичи ялĕ çывăхĕнче çынсене ушкăнăн-ушкăнăн персе пăрахма пуçланă.

Н.Волков хăйĕн ушкăнне Гроднăран 200 çухрăмра вырнаçнă Барановичи хулине куçарма палăртнă. Унта вĕсене никам та палламасть, хула витĕр пĕлтерĕшлĕ чукун тата шоссе çулсем иртеççĕ. Кунта подпольщиксем "рельссем çинче çапăçу пуçарма" тĕллев лартнă. 1941 çулхи раштав уйăхĕнче икĕ ушкăн палăртнă вырăна тухса кайнă. Виççĕмĕш ушкăнпа Н.Волковăн тата мăшăрĕн Варвара Васильевнăн çула тухмалла пулнă.

Шел те, палăртни пурнăçа кĕреймен. Гестапо Н.Волковпа кăсăкланма пуçланă. Кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче, вăрçă пуçланнă хыççăн 219-мĕш кун, ăна арестленĕ. Подпольщиксенчен А.Гуцко хăйсен командирне юлашки хут курнă. Александр Клементьевич çак самант пирки çапла каласа кăтартать: " Ман пата Николай кăнтăр апачĕ хыççăн килчĕ. Хăй питĕ савăнăçлă. "Лайăх сводка пур", – тет. Пирĕн çарсем гитлеровецсене Кăнтăр-Хĕвел анăç фронтĕнче çапса аркатнă иккен. Ман патра нумай тăмарĕ вăл, тухса кайрĕ. Кĕçех Зеленевский килчĕ. Сводка вуласа ларнă вăхăтра кӳршĕ чупса кĕчĕ: "Чупăр хăвăртрах! Волкова арестленĕ!" Малтанах провокаци пулĕ терĕмĕр, вырăнтан тапранмарăмăр. Каярахпа асăрханса Волковсен çурчĕ патне çул тытрăмăр. Кунта чăнах та гестаповецсем хуçалананçĕ".

"Волковпа мăшăрне, ытти подпольщике фашистсем нумай асаплантарнă, тирне сӳнĕ. Апла пулин те пĕри те тăшман майлă çаврăнман, чăтнă", – тет ушкăн членĕ пулнă З.Аладьев.

Организаци шар курнин сăлтавĕ мĕнре-ха? Никам та татăклăн калаймасть. Музей директорĕ Р.Прохорова каланă тăрăх – Н.Волковпа юлташĕсене Саша текен çын сутнă. Подпольщиксем ăна маларах гетторан тарма пулăшнă. Акăлчанла пĕлнĕрен Н.Волков ăна Лондонран паракан сводкăсене итлеме явăçтарнă. Çакăн хыççăн организаци членĕсене урăх никама та арестлемен. Çакă Волковпа юлташĕсем тек никама та сутманнине çирĕплетет. 1942 çулхи нарăс пуçламăшĕнче Н.Волкова, В.Шапошниковăна, Н.Быкова, А.Василюка, И.Завишăна, Г.Хорова гестаповецсем Немировичи ялĕ сывăхĕнче персе пăрахнă.

СССР Оборона халăх комиссариачĕн кадрсен управленийĕн документчĕсенче "Н.А.Волков лейтенант 1941 çулта хыпарсăр çухалнă" тесе çырнă. Çак йăнăш мĕнле майпа пулнă-ха? Вăл хăйĕн часĕнчен Гроднăна çемйине илме кайнă. Тепĕр кун вăрçă пуçланнă. Службăра тăнă Белостока каялла тавăнма пултарайман вăл, мĕншĕн тесен пирĕн çарсем чакса кайнă. Çапла майпа вăл оккупацие лекнĕ хулара тăрса юлнă. А.Бачило пĕлтернĕ тăрăх – пĕррехинче ентеш вĕчĕрхенсе çапла каланă: "Мана çăмăл тетĕр-им? Ахăртнех, унта ман пирки таркăн тесе шухăшласçĕ". Паттăрлăхĕ пирки пĕлнĕ хыççăн тин 1949 çулхи нарăсăн 25-мĕшĕнче Чăваш Республикине Н.Волкова персе вĕлерни çинчен пĕлтернĕ.

Шел те, вăрçă хыççăн Гроднăри подпольщиксен пĕрремĕш ушкăнĕ манăça тухма пуçланă. 1964 çулта тин, Гроднăна тата Беларуçре нимĕç фашисчĕсенчен ирĕке кăларнăранпа 20 çул çитнĕ май, "Коля пиччĕ ушкăнĕ" пирки каласма пуçланă. 7-мĕш шкул вĕрентекенĕ Александра Бачило Волков çинчен литература кружокне çӳрекенсене каласа кăтартнă. Ачасем Тамара Тесленко учительпе пĕрле чĕрĕ юлнă подпольщиксене шырама пикеннĕ. Çапла майпа Гродно çĕрĕнче пирĕн ентешсен паттăрлăхĕ пирки пĕлнĕ. 1968 çулта, каярахпа та "Коммунизм ялавĕ", "Советская Чувашия", "Молодой коммунист" хаçатсем вĕсем пирки çырса Чăваш Ене хыпар çитернĕ.

Гроднăри 35-мĕш шкулта "Память хранит" музей уçнă. Унта подпольщиксен паттăрлăхĕ пирки каласа кăтартакан хаклă экспонатсем упранаççĕ. Хулари пĕр урама Николай Волков ятне панă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине çĕнтерӳпе вĕçленĕренпе 64 çул çитнĕ тĕле 10-мĕш çурт çине Н.Волков ячĕпе асăну хăми вырнаçтарнă.

...Мĕн пирки шухăшланăши Н.Волков пурнăçран уйрăлас умĕнхи юлашки минутсенче? Хĕрĕ Нина тата ывăлĕ Гера çинчен-ши? Чăваш Ен е Раççей пирки-ши? Çапах та вăл фашистсем Варьăпа юлташĕсен, унăн вăхăтсăр татнă пурнăçĕ çĕнтерӳ, пин-пин ачан телейлĕ кун-çулĕ патне тунă утăм пулнине ĕненнĕ. Автомат чарăнмасăр шатăртатнă... Паттăрсен кĕлеткисем сивĕ çĕр çине тӳннĕ... Волковпа юлташĕсем чăтма çук йывăр асапа чĕмсĕррĕн тӳссе ирттернĕ хыççăн вилĕмсĕрлĕх ытамне ура ярса пуснă...

...2014 çулхи нарăс уйăхĕн пĕрремĕш кунĕсем. 2-мĕш форт патне автобуссем пырса чарăнчĕç. Транспортран шкул ачисемпе вĕрентекенсем, Гродно патшалăх университечĕн студенчĕсемпе преподавателĕсем, хулари чăвашсен "Атăл" общество организацийĕн членĕсем, вăрçă ветеранĕсем тухрĕç. Кунта фашизм шар кăтартнă çынсене асăнса палăк лартнă. Ывăлĕсене куççульпе хурланса аса илекен амăшĕ... Çулсерен çак вăхăтра кунта гестаповецсем персе пăрахнă подпольщиксене асăнса митинг-реквием иртет.

Н.Волков, В.Шапошникова, Н.Быков, А.Василюк, И.Завиша, Г.Хоров... Çынсем! Вĕсене тата фашизм синкерĕ тĕп тунă миллион-миллион çынна ĕмĕр асра тытăр!

Нина тата Гера. Нацист палачĕсем тăлăха хăварнă ачасем. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле персе пăрахассинчен ăнсăртран çеç çăлăнса юлма пултарнă вĕсем. Шăпи мĕнле килсе тухнă çав ачасен? Чĕрĕ-и е оккупацирен хăтăлса тухайман-и? Музей директорĕ Р.Прохорова пĕлтерчĕ: Нинăпа Гера Чăваш Енре пурăнаççĕ.

■ **Владимир ВАСИЛЬЕВ,**
культурологи докторĕ,
И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ
профессорĕ

Çул çӳрев

Литература классикĕсен тăван çĕрĕнче – хăнара

ЧНК Президенчĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Угаслов тата ЧНК вице-президенчĕ, Тутар Республикинчи чăваш наци культура автономийĕн председателĕ Константин Яковлев паллă чăваш поэчĕсем Константин Ивановпа Ухсай Яккăвĕ çуралса ӳснĕ тăрăха, Пушкăртри Слакпуç ялне, çитсе курчĕç.

ЧНК ертӳçисене Слакпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Олег Беляев кĕтсе илчĕ. "Нарспи" авторĕн тăван çĕр-шывĕнче ас тăвăм музейĕ 70 çул каяллах ĕçлеме пуçланă. Хăнасем унта экскурсире пулчĕç. "Кун-çулĕ кĕске пулнă, апла пулин те мĕн чухлĕ пуянлăх хăварма пултарнă вăл", – терĕ Николай Угаслов чăваш литературин классикĕн пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе паллашнă хыççăн.

Н.Угасловпа К.Яковлев поэтăн вил тăпри патне кайрĕç, палăкĕ умĕнче пуç тайрĕç. Сетнерпе Нарспи тахçан тĕл пулнă çăл куçран сивĕ шыв ĕçрĕç. Унтан Константин Ивановпа Ухсай Яккăвне пултарулăхне хĕмлентерме вăйхăват парса тăнă Кĕсле тусине хăпарчĕç. Кунтах 1986 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче Ухсай Яккăвĕ ĕмĕрлĕх канлĕх тупнă.

"Паян тахçанхи ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ. Константин Иванов мĕнле сывлăшпа сывласа хавхаланнине хам туйăрăм. Кăмăлăм тулчĕ, Слакпуç ялĕ патнелле выртакан сукмака курăк пусманнине курса савăнтăм", – терĕ ЧНК президенчĕ Николай Угаслов.

■ **О.ПЕТРОВ**

Ял пурнăçĕ

Мĕн тути юлĕ-ши асра?

Выльăх усрани тупăшлă мар тет ял çинни. Колхоз-совхоз кĕрлесе тăнă чухне утă-улăм, тыр-пул енчен ирĕклĕ пулнă. Халĕ ура çинче çирĕп тăракан хуçалăх çукпа пĕрех. Çавăнпах хăвăн пай çĕр лаптăкĕ çинче ӳстерме тивет е самай пысăк хакпа туянмалла. Çав укçапа лавккара е пасарта аш-какай, сĕт-турăх илсен йӳнĕрех те ларать.

Паян сутлăхра пурте пур – укçу кăна пултăр. Кĕсье хулăн тăк çурт та çĕкленет, хваттер те юсанать, пахча та сухаланать... Кĕтӳ те кĕтĕнет тесе калас килет те, анчах чĕлхе çаврăнмасть. Кĕтӳ кĕтес текен çук халĕ. Черетпе паракан укçаран самай пысăк шалу пухăнать. Апла пулин те çын ĕçсĕр çапкаланса çӳресен те кĕтӳ кĕтме килĕшмест.

Лавкка сентрисем тĕрлĕ апат-çимĕçпе пуян. Ялсенче те суту-илӳ вырăнĕ халĕ пĕрре-иккĕ кăна мар. Юлашки вăхăтра тата çурмафабрикат сутакан лавккасем уçăлма пуçларĕç. Унта пельмень-катлетран пуçласа икерчĕ таран пур. Мĕнрен тата мĕнле условисенче хатĕрленĕ вĕсене – пĕлме çук. Чăх, сысна е ĕне какайĕнчен тунă-и – пурте пĕр тутăллă. Вĕсене çиес килнине вăйлатакан ятарлă хутăшсемпе пуянлатаççĕ.

Хĕвел анăçри çĕр-шывсенче вĕсем тахçанах анлă сарăлнă. Телевизорпа каланине ĕненес тĕк – унта пурăнакан халăхăн ытларах пайĕ мăнтăрланни хими элеменчĕсемпе тутлăлантарса хатĕрленĕ апата çинине çыхăннă. Çурма хатĕр апат пирĕн лавккасенче икĕ-виçĕ çул каялла çеç курăна пуçларĕ. Апла пулин те эпир вĕсене хăнăхрăмăр. Тутăлăх, пахалăх, усăлăх енчен илсен вĕсем килте ӳстерсе пуснă выльăх какайĕ çывăхне те пымаççĕ.

Пĕр тесен ялта паян камсем пурăнаççĕ-ха? Ытларах тивĕçлĕ канăва кайнă çынсем. Е уйăхсерен алла укçа илекен ватăсем. Ватă çынна выльăх пăхма çăмăл мар. Лавккана кайса мĕн кирлине туяннинчен ырри çук уншăн. Тепĕр ушкăн – кил хуçи аякка ĕçлеме çӳрекен çемьесем. Вĕсем выльăх усраманнин сăлтавĕ иккĕ. Пĕрремĕшĕ – арçын килте çук чухне хĕрарăма утă çулма, кĕтӳ кĕтме пĕччен йывăр. Иккĕмĕшĕ – укçаллă çын мĕн тума пилĕк авса тарăхтăр, каять те лавккаран хатĕр апат туянать. Виççĕмĕш ушкăна кĕрекенсем – "ик айкки те тăвайкки" каларăша пăхăнса пурăнакансем. Урăхла каласан – ĕçкĕпе туслашнисем. Ун пеккисене çимелли нумай кирлĕ мар, ĕçмелли ытларах пултăр.

Юлашки вăхăтра пирĕн пурнăçа тепĕр "çĕнĕлĕх" кĕрсе тымарланчĕ. Уйрăмах ялсенче, унта çынсем пĕр-пĕрне лайăх пĕлеççĕ. Лавккаран кивçенле туянаççĕ. Кĕтмелле илекенсен ячĕсем – тетрадь тулли. Акă укçаран татăлнă хĕрарăм упăшки вахтăран тавăрăнсанах килсе тӳлеме шантарса лавккаран апат-çимĕç тултарса кайрĕ.

Çав самантрах – вăрах вăхăт тум-тирне çуманран-ши е кунĕн-çĕрĕн ĕçкĕллĕ çӳренĕрен-ши – хăйĕнчен лайăх мар шăршă кĕрекен çамрăк хĕрарăм килсе кĕчĕ. Сутуçăран эрех ыйтать. Мĕн ыйтнипе тивĕçтерсе унăн ятне те тетраде çырса хучĕ сутуçă. "Кун пеккисене епле сутма хăрамастăн? Тӳлеççĕи?" – ыйтрăм унран. "Пурăнсан-пурăнсан килсе параççĕ. Уйăхне 4-5 пине те çитсе каять. Вĕсенчен хăтăлма çук, часрах илччĕр те тухса кайччăр", – терĕ вăл.

Ас тăватăп: ача чухне çĕр-шывра е тĕнчере пĕр-пĕр инкек сиксе тухсан аслисем: "Эпир ялта выçă лармăпăр. Хуларисен ăçтан çалăнăç тупмалла? Ялта çерçи те выçă вилмест", – тетчĕç. Карта тулли выльăх тăрсан аш-какайĕ те, сĕчĕ-хăйми те, çăвĕ-турăхĕ те пур, чăх-чĕп усракан çăмартаран татăлмасть. Килти пахча çимĕçе те хĕлĕпе çиме май пур, шăнтса е тăварласа хума çеç ан ӳркен.

Шухăшлатăп та – халĕ ялта пурăнса та выçса вилме пулать иккен. Ял çынни ашкакайне, юр-варне тата ытти çимĕçе лавккаран туянать. Пахалăх пирки шухăшласа пуç ватмастпăр. Кăмакаран тин тухнă вĕри çăкăртан пысăк чĕлĕ касса илсе кăпăклă сĕтпе сыпса е пӳрне хулăнăш хăйма сĕрсе çини паян та асра. Халĕ ялта çитĕнекен ачасен асĕнче еплерех апат тути упранĕ-ши? Чăх пĕççи-и? Сосиска-и? Йӳçме те, пăсăлма та пĕлмен йогурт-и е кăвакара пуçланă çăкăра тураса тăварпа хутăштарса типĕтнĕ сухари-и?...

Хальхи вăхăтра ялти 20-30 килтен пĕринче çеç какай, сĕт-турăх, çăмарта пултăр тесе карта тулли выльăхпа чăх-чĕп тытаççĕ. Вĕсем выльăх пуссан какайне кӳрши-арши çавăнтах туянать. Сĕтне, хăймине, çуне, турăхне те куллен килне килсех илсе каяççĕ. Ĕçчен çын кĕсйине çавăнтан сахал мар тупăш кĕрет. Пурăна киле çын паха апата ытларах хисеплеме пуçлассине манăн çав тери ĕненес килет.

■ **Галина ДАНИЛОВА**

"Выльăх-чĕрлĕх чăмăр пултăр"

Пĕр çулхине кĕтӳ черетне эпир пуçланăччĕ. Ĕнисене хăвалама тухнă ял çыннисем мана, пĕчĕкскере, чăх çăмарти тыттарнă май: "Кĕтӳри выльăх-чĕрлĕх çак çăмарта пек чăмăр пултăр, киле тавăрăнтăр, сывă çӳретĕр", – тенĕччĕ. Ытти тăрăхра кун пекки пур-ши?

Пишпӳлек тăрăхĕнчи Çирĕклĕ ялĕнче пурăнакан педагогика ĕçĕн ветеранĕ **Сере Андреева:**

– Тĕне кĕмен чăвашсен выльăх-чĕрлĕхпе çыхăннă йăлайĕрке нумай пулнă. Сăмахран, кĕтĕве яриччен чăх çăмарти тытса картари выльăх тавра çаврăннă. Кĕркуннеччен пурте йĕркеллĕ, ырă-сывă пулччăр, кĕтӳре лайăх çӳреччĕр тенĕ.

Кăçал пуçласа кĕтӳ кĕтме мăшăрăм Марат Миронович тухрĕ. Пĕрремĕш кун выльăх пухăнакан вырăнта ун кутамккине пĕрисем – çăмарта, теприсем – канфет, виççĕмĕшсем йăва, сăра хучĕç. Кĕтӳçĕсене ырă сунса сăйласси пирĕн тăрăхра çирĕп йăлара. Пуçласа кĕтӳ кĕтме тухакансем ял вĕçĕнче пир татăкĕ сарса чӳклеççĕ. Вĕсенчен асли: "Выльăх-чĕрлĕхе çăвĕпе лайăх кĕтмелле пултăр, кĕркуннеччен ырă-сывă çӳреччĕр, самăрланччăр", – тесе сăрапа чӳк ирттерет.

Мăнукăм та кĕтĕве кайнăччĕ. Вăл киле таврăнсан ялйыш ăна ырă сăмах нумай каланине, тĕрлĕрен апатпа сăйланине хавхаланса каласа пачĕ.

Федоровка тăрăхĕнчи Ашкатар ялĕнчи **Мария Кузьмина:**

– Чи малтан пирĕн патра сурăх кĕтĕвĕ тухать. Сурăхсене Кăчкă уявĕнче татнă хăва хуллисемпе хăвалаççĕ. Кĕтӳçĕ выльăх-чĕрлĕх кĕркуннеччен сывă çӳретĕр, тутă пултăр, курăк лайăх ӳстĕр, çумăр çителĕклĕ çутăр тесе кашни килтен виçшер çăмарта, канфет-премĕк пухать.

Мияки тăрăхĕнчи Тимеш ялĕнчи **Николай Петров:**

– Выльăхсене картаран кăлариччен вĕсем таврa çăмартапа çаврăнаççĕ. "Самăр пулăр, сĕт лайăх антарăр, ырăсывă çӳрĕр", – тесе кĕтĕве хăвалаççĕ. Унтан çав çăмартасене кĕтӳçĕсене тыттараççĕ. "Çаврa çăмарта пек саланмасăр çӳрĕр, ырă-сывă пулăр", – тесе каласçĕ. Пĕрремĕш кун халăх кĕтĕве ялтан тухиччен хăвалать, выльăх-чĕрлĕх лăпланиччен килне таврăнмасть.

Кармаскалă тăрăхĕнчи Йăмран ялĕнче пурăнакан **Ольга Волкова:**

– Ĕлĕк кĕтĕве ялтан ушкăнпа хăваласа тухаттăмăр. Анаткас вĕçĕнче выльăхсем лăпланиччен пĕрер сехет кĕтеттĕмĕр. Халĕ ку йăла çук ĕнтĕ. Кĕтӳçĕсене икĕ çăмарта панă чухне: "Кĕтӳ çăмарта пек чăмăр çӳретĕр, ăна салатмасăр кĕтĕр, кĕркуннене выльăхсем мăнтăр кĕччĕр", – тесе калатпăр.

Кĕтӳ хăвалана хыççăн никам патне те кĕмелле мар, тӳрех киле каймалла. Хулла карта алăкĕ тăррине хумалла, кайран унпа кашни кун выльăхсене хăваламалла. Асăннă йăлана выльăх киле таврăнтăр, саланса ан кайтăр тесе тунă.

Ермеккей тăрăхĕнчи Янăшмара пурăнакан **Алевтина Васильева:**

– Ялта пуçласа кĕтӳ тухсан пĕçернĕ çăмартапа кĕтӳ йĕритавра çаврăнасси йăлара. Кашни кил хуçи кĕтӳçе çăмарта пама тăрăшать. Ăна аллинчен тыттарнă май: "Выльăх-чĕрлĕх çак çăмарта пек самăр, чăмăр пултăр", – теççĕ. Кăнтăрлахи апатра кĕтӳçĕсем çав çăмартасене çиеççĕ. Кĕтӳ хăвалана хулла киле илсе таврăнаççĕ. Унсăрăн выльăх-чĕрлĕх çухалма пултарать теççĕ.

Чăваш халăхĕ мĕн ĕлĕкренех сăнама юратнă. Пухнă ăса пĕр ăруран теприне çитерме тăрăшнă. Çĕр-аннемĕре, çут çанталăка сывăх пулнă. Вĕсем калани тĕрĕссине пурнăç пĕрре мар çирĕплетет. Çав шутра – асăннă йăла та.

■ **Натали ЧИСЛОВА**
ыйтса пĕлнĕ.
Пушкăртстан

Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатĕрленĕ.

Чĕмпĕрсем Акатуйра савăнчĕç

Чĕмпĕр облаçĕнче чăваш халăх уявĕ Акатуй иртрĕ. Уява Чăваш, Пушкăрт, Тутар республикисенчен, Сарă ту, Самар облаçĕсенчен килнĕ хăнасем хутшăнчĕç.

"Акатуй çĕр ытла халăх ывăлĕ-хĕрĕ пурăнакан Чĕмпĕр облаçĕнче 25-мĕш хут иртет, – терĕ регион пуçлăхĕ Сергей Морозов халăха паллă çак пулăмпа саламланă май. – Çулран çул уява хутшăнакансен йышĕ ӳсет, тĕрлĕ нации çыннине илĕртет вăл. Акатуй чăннипех те тĕрлĕ халăх уявĕ. Эпир çакăнпа мăнаçланатпăр!"

Акатуй Чĕмпĕрти Çĕнтерӳ паркĕнче иртрĕ. Чи малтанах акасуха ĕçне пĕтернине çирĕплетсе пысăк сцена умне суха пуç килсе хучĕç. Унтан юрă-ташă ушкăнĕсем, фольклор коллективĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Ипподромран инçех мар лапамра наци вăйăисен ăмăртăвĕсем иртрĕç. Юпа çине хăпарса, кĕвентепе чупса, вĕрен туртса тупăшрĕç, михĕсемпе çапăçрĕç. Кĕрешӳ турнирне хутшăнакан та чылай пулчĕ.

Хăнасем кафе-апатланмăшра тутлă çимĕçпе сăйланчĕç. Каласма ӳркенмен сутуçăсем хăйсен таварне мухта-мухта пыл, тĕрĕ-чĕнтĕр, капăр япала туянна йыхравларĕç. Тĕрлĕ юмах сăнарĕсем пĕрле сăн ӳкерттерме сĕнчĕç. Чипер хĕрсем чăваш халăх тумĕсене кăтартрĕç. Чăваш халăхĕн кун-çулĕпе паллаштаракан курав чылайăшне хăй патне туртрĕ. "Выля, хут купăс!" конкурса хутшăннă купăссăсемпе такмакçăсене чылайччен алă çупса хавхалантарчĕç. Кашниех асăнмалăх наци сувенирĕсене туянма пултарчĕ.

■ **Д.ЮДИНА.**
Чĕмпĕр облаçĕ

Ăнăçусем хавхалантараççĕ

Шăмат кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкар районĕнчи Çĕньялта пулнă, районăн «Акатуй» уявне хутшăннă.

Республика Пуçлăхĕ ял тăрăхĕсен çитĕнĕвĕсен куравĕпе, чăваш халăхĕн йăла-йĕрке тата ал ăстисен пултарулăхĕн ярмăрккипе паллашнă. Районта пурăнакансене çур акине вĕçленĕ ятпа саламланă май Михаил Игнатьев Шупашкар районĕн экономика аталанăвĕн кăçалхи кăтартăвĕсем пĕлтĕрхинчен пысăкраххи çинчен каланă. Кăçалхи кăрлачçу уйăхĕсенче тиесе ăсатнă таварсен калăпăшĕ пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 12% ӳснĕ, аш-какай туса илесси – 19%, сĕт суса илесси 4% пысăкланнă. Ял хуçалăх предприятийĕсем, хресчен-фермер хуçалăхĕсем тĕш тырă культурисен лаптăкĕсене çуллен ӳстерсе пыраççĕ.

«Районăн мĕн пур территорийĕ ăнăçлă аталанать. Уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсем паха продукци туса илеççĕ. Шупашкар районĕн майĕсем анлă. Муниципалитетăн ылтăн фончĕ – кадрсем. Социаллă пурнăçпа экономикăна малашне те ăнăçлă аталантарас тĕллевпе шалти резервсемпе туллин усă курмалла», – тенĕ Михаил Васильевич.

Вăл ял хуçалăх бизнесне аталантарма, ялти пурнăç условийĕсене лайăхлатма патшалăх малашне те пулăшса пырассине палăртнă. Калăпăр, 2014 çулта республикăн агропромышленноç комплексне патшалăх енчен кӳрекен пулăшу 2,1 млрд тенкĕпе танлашмалла. Вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура, физкультурăпа спорт валли бюджетран уйăрмалли тăкак обязательствисем те туллин пурнăçланаççĕ.

Шупашкар районĕнче пурăнакансене уяв ячĕпе «Раççей-2014» автоэкспедицие хутшăнакансем те саламланă. Вĕсем автомобильсемпе 40 яхăн хулана çитме палăртнă. Маршрут тăршшĕ – 20 пин км ытла, çак маршрут çĕр-шыв картти çинче «Раççей» сăмаха сăнарламалла. Туризма пропагандăлакан проект ертӳçи, паллă çул çӳревçĕ Сергей Доля палăртнă тăрăх – Чăваш Ен çут çанталăкĕ хăйне евĕрлĕ, культури пуян, çавна май республика туристсемшĕн илĕртӳллĕ.

Михаил Игнатьев районăн чи маттур ĕçченĕсене наградăсем панă. Хисеплĕ ятсене, Тав хутне, парнене тивĕçнисен ретĕнче – «Чебоксарскагропромтехсервис» фирма гендиректорĕ Александр Бородавин, «Чурачикское» АУОн тĕп зоотехникĕ Ирина Филиппова, Кӳкеçри вăтам шкул вĕрентекенĕ Галина Федорова, «Чăваш бройлерĕ» АУОн тĕп энергетикĕ Владимир Васильев тата ыттисем.

А.ПАВЛОВ

РФ пенсионерĕсен спартакиади

Аслă ăру хастарĕсем спортсăр пурăнаймаççĕ

Чăваш Еншĕн çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕ спорт мероприятийĕсемпе пуян. Профессионалсем çĕр-шыв чемпионачĕсенче, ял ĕçченĕсем çуллахи спорт вăййисенче, çамрăксем Атăлçи округĕн ăмăртăвĕсенче тупăшрĕç. Уяв умĕн Чăваш Ен тĕп хули пĕлтерĕшлĕ тепĕр турнира – Раççей Федерацийĕнче пĕрремĕш хут иртекен пенсионерсен спартакиадине – йышăнчĕ.

Шупашкарти «Спартак» стадионта иртнĕ спорт уявĕ командăсемпе паллаштарнинчен пуçланчĕ. Раççейри 56 регион ветеранĕсемпе Беларуç, Таджикистан, Узбекистан, Серби пенсионерĕсем килсе çитнĕ пирĕн тăраха. Вĕсен йышĕнче: завод-фабрикăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисем, çамрăк ăрăва пĕлӳ тĕнчипе паллаштаракан профессорсемпе педагогсем, ĕçпе спорта шайлаштарса пынă ветерансем тата ыттисем. Чи сумлисем – 84 çулти Зоя Романовская /Липецк облаçĕ/ тата 86-ри Анатолий Корнилов /Тверь/. Крымпа Севастополь командисене уйрăмах хавхаланса кĕтсе илчĕç куракансем. «Эпир спортсăр пурăнаймастпăр. Пире вăй-хал, ăнăçу, çитĕнӳ парнелет, çĕнĕ утăмсем тума пулăшать», – пĕлтерчĕç аслă ăру хастарĕсем.

Спортсменсене ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата сумлă хăнасем – Федераци Канашĕн Социаллă политика енĕпе ĕçлекен комитет ертӳçи, Раççей пенсионерсен союзĕн Тĕп правленийĕн президиумĕн председателĕ Валерий Рязанский тата РФ Спорт министерствин физкультурăпа спорт аталанăвĕн департаменчĕн директорĕ Марина Томилова – саламларĕç. «Спортпа туслă çын вăйлă та хăюллă, илемлĕ те çирĕп сывлăхлă. Вăл ĕçре те тăрăшуллă, общество пурнăçĕнче те хастар. Спортсмен нимĕнле йывăрлăхран та хăрамасть, хăйĕн тĕллевĕсемпе ĕмĕчĕсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурать, çĕнтерӳ патне талпăнать. Тупăшура та яланах чи пултарулли мала тухать. Чăваш Енре массăллă спорта аталантарас тĕллевпе чылай ĕç пурнăçланать: çулсерен çĕнĕрен те çĕнĕ керменсем çĕкленеççĕ, вун-вун мероприяти иртет», – терĕ Михаил Васильевич.

Валерий Рязанскин сăмахĕсем ватă çынсен чун-чĕрине уйрăмах тыткăнларĕç пулĕ. «Эсир яланах пĕрремĕш пулнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче те тăшмана хирĕç чи малтан тухнă, çерем уçма та хутшăннă, фабрика-завод та сирĕнсĕр ĕçлемен... Акă паян та эсир историллĕ пĕлтерĕшлĕ пулăмран юлмарăр – пенсионерсен пĕрремĕш спартакиадине хутшăнатăр. Сире ватă тесе те калас килмест, мĕншĕн тесен эсир халĕ те стройра: общество ĕçĕнче пултарулăхпа палăратăр, мăнукăрсене ӳстерес енĕпе сатур, çав вăхăтрах чылайăшĕ спортпа туслă», – терĕ вăл.

Пĕрремĕш спартакиадăна иртермешкĕн мĕншĕн Чăваш Республикине суйласа илнĕха? «Сирĕн республика спортпа туслă регион, 2013 çулхи пĕтĕмлетӳпе наци премине тивĕçнĕ. Кунта массăллă тата ача-пăча спорчĕ вăйлă аталанать, çавăн пекех ветерансемпе сусăррисем валли те сывă пурнăç йĕркине тытса пымашкăн условисем çителĕклех», – пĕлтерчĕ РФ Спорт министерствин ĕçченĕ Марина Томилова.

Спартакиадăра 55-60 çулсенчен иртнĕ хĕрарăмсемпе арçынсем ишес, перес енĕпе, сĕтелçи теннис, çăмăл атлетика, шахмат турнирĕсенче тата эстафетăра вăй виçрĕç. Çавăн пекех вĕсем доминолла тата волейболла вылярĕç. Ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе пьедесталăн пĕрремĕш картлашки çине Кемĕр облаçĕн ветеранĕсем хăпарчĕç, кĕмĕл медале Пермь крайĕн пенсионерĕсем çĕнсе илчĕç. Чăваш Ен команди – виççĕмĕш вырăнта. Пирĕн ентешсене хутăш эстафетăра уйрăмах ăннă: пухмача «бронзăпа» пуянлатнă. РФ пенсионерсен пĕрремĕш спартакиадинче республика чысне 8 ветеран хӳтĕленĕ. Акă вĕсем: Шупашкарти Роза Алексеева, Фрида Кузнецова, Сергей Юрьев, Мария Ушенина, Анатолий Алексеев, Татьяна Богдашкина, Каçал тăрăхĕнчи Анатолий Давыдов, Йĕпреç районĕнчи Владимир Васильев. Пурте спартакиадăн республикăри тапхăрĕнче малти вырăнсене йышăннă, çĕршыв ăмăртăвĕнче те лайăх кăтартусемпе палăрнă.

Андрей МИХАЙЛОВ

Криминал

Вырсарни кун та – йывăр кун

Маршрутка водителĕ хăйĕн çулне кĕтмен çĕртен пӳлнĕ автомобилистпа тавлашнă-хирĕçнĕ вăхăтра пассажирсенчен тахăшĕ унăн билет сутса пухнă укçа чикнĕ барсеткине йăкăртнă.

Ăна чăннипех ăнман. Шупашкарти «Олимпийский» стадион патĕнче 35 çулти маршрутчик тепĕр водителе /вăл унăн çулне пӳлнĕ имĕш/ ăс памашкăн кабинăран тухнă. Хирĕçӳ уншăн ăнăçлă вĕçленнĕ теейĕмĕн: арçыннăн хăйне палламан водитель хĕнени пирки полицие евитлеме тивнĕ. Çав вырăнтан хускалса юлашки чарăнăва, çул вĕçне, çитнĕ те – салонран барсетки çухалнине асăрханă. Унта вара кунĕпе çул çӳресе пухăннă укçа пулнă – 20 пин тенкĕ. Мĕскĕнĕн каллех «02» телефонпа шăнкăравлама тивнĕ.

Кĕске вăхăтрах икĕ хут шар курма ĕлкĕрнĕскер хăй каланă тăрăх – барсеткăна шăпах вăл стадион патĕнче кабинăран тухсан такам вăрланă. Хайхи пуçтах водительпе хирĕçнĕ вăхăтра вăл куç хĕррипе тенĕ пек салонран пĕр пассажир, хĕрарăм, тухнине курса юлнă. Çул çинчи пăтăрмах умĕн кăшт маларах, хула центрĕнче, шăпах çав хĕрарăм билетшăн пысăк купюрăпа тӳленĕ, çавăн чухне вăл шофер укçа тĕркине ăçта чикнине курнă.

Полицейскисем хайхи хирĕçĕве сăлтавланă водителе, маршрутчике кӳрентернĕскере, тупнă. Анчах пăтăрмах тĕлĕшпе унăн версийĕ пачах урăхла иккен. Вăл каланă тăрăх – маршрутка водителĕ çул çинче хăйне ытла та йĕркесĕр тытнă: çине-çинех çул-йĕр правилисене пăснă. Çавна май ун хыççăн машинăпа пыраканскер пĕчĕк автобус водительне усă чӳречерен кăшкăрса асăрхаттарнă: «Çынсене илсе çӳретĕн вĕт – мĕн хăтланатăн?!»

Пĕр-пĕринпе сасă хăпартса ятлаçса илнĕ хыççăн иккĕшĕ те хăйсен çулĕсемпе кайнă, водитель маршрутка рулĕ умĕнчи арçынна тĕкĕнмен тесе çирĕплетет.

Çак ĕç-пуçпа çыхăннă материалсене ыйтăва граждан судопроизводствин йĕркипе татса памашкăн миравай суда ярса панă. Тепĕр тесен вăхăт иртнĕ май водительсем иккĕшĕ те «сивĕннĕ» те – пĕр-пĕрин тĕлĕшпе тавăç тăратас шухăш çук. Вĕсен хирĕçĕвĕпе питĕ меллĕ те никам сисмелле мар усă курнă пассажира вара халĕ те шыраççĕ-ха.

Ольга ПАВЛОВА

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

ЗАВОД ООО «ЖБК-2»
ЖЕЛЕЗОБЕТОННЫЕ ИЗДЕЛИЯ ВСЕХ ВИДОВ
КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ БЛОКИ
КОЛЬЦА КОЛОДЦЕВ
БЕТОН, РАСТВОР ВСЕХ МАРОК
НЕЛИКВИДЫ ЖБИ
ОТХОДЫ ДРОБЛЕННОГО БЕТОНА
ДОСТАВКА ПО РЕСПУБЛИКЕ
СЕРТИФИЦИРОВАННАЯ ЛАБОРАТОРИЯ
Телефоны: (8352) 73-74-66, 73-08-97

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Доставка. Т. 444433.

33.Гравмассу, песок, щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

124.Песок, щебень, гравмассу, керамзит, торф, кирп. бой, цемент. Т. 89033220479, 48-04-79.

172.Гравмассу, керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, **керамзит, песок** в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 89033580679.

253.КВАДРОЦИКЛ новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 89276689839.

295.Навоз, торф. Т. 89613383011.

317.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу, щебень,** керамзит, асфальтную **крошку,** бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 89030666630.

369.Гравмассу, песок речной, карьерн., **щебень.** Т. 89520269954.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 89603080854, 89170660480.

408.Керамблоки 20x20x40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 36-26-23, 89033797768.

417.Песок, гравмассу, щебень. Доставка. Т. 89278535417.

424.Месячных бычков по 8,5 тыс. руб. Доставка. Т.: 89176641716, 89196690171.

УСЛУГИ

250.Кровельные, фасадные работы. **Монтаж** водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

РАБОТА

368.Требуются: сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /8352/ 37-85-75 /"АльянсГрупп"/.

385.Требуются плотники. Т. 483900.

425.Требуются строители в Москву и Подмосковье для отделки зданий МВД: **сварщики** – 2000 руб. в день; **разнорабочие** – 1500 руб., отделочники – сдельно. Расценки хорошие; питание, проживание. Тел. 89255266193, Валентин Борисович.

Пулать вĕт!

Пĕррехинче, тулли уйăхлă каç

Вăл кун Якур Ямщиков Шупашкар районĕн çар комиссариатĕнче çĕр-шыв хӳтĕлевçин ретне тăма повестка илчĕ. Шупашкартан Ишлей ялне çити автобуспа килсен тăван Çĕньял Чурачăка татах виçĕ çухрăм утмалла унăн. Юпа уйăхĕ вĕçленсе пырать пулин те çут çанталăк çу ăшшипе сыв пуллашма васкамасть-ха. Çула май кам та пулин пĕрле утмĕ-ши тесе вун тăххăрти каччă енчен еннелле пăхкаларĕ, анчах никам та курăнмарĕ. Вунă минут пек кайсан хыçалта такам вĕттĕн-вĕттĕн таплаттарни ун хăлхине кĕчĕ. Вăрт çаврăнса пăхрĕ те пĕчĕк пӳ-силлĕ çамрăк хĕрарăма асăрхарĕ.

– Санран юлас мар тесе пĕтĕм вăй-халран чупнипе сывлăш та пӳлĕнме пуçларĕ, тыт-ха мана хулран, ахальлĕн халь-халь тӳнетĕп, – Якур çумне тĕршĕнчĕ хĕрарăм.

«Те арăм, те хĕр ĕнтĕ ку? Ма эпĕ ăна халĕччен те курман ку тăрăхра?» – хăйĕнчен хăй ыйтрĕ Якур.

– Эсĕ ăçтисем вара, ытла та хӳхĕмскер? – чĕвĕлтетрĕ селĕп чĕлхипе хĕрарăм.

Вăл «р» сас паллине «й»-па улăштарса калаçнине Якур тӳрех сисрĕ.

– Касман турта пуçĕнчен теес – кӳренетĕн, эсир яланах çапла вĕт: чăннине калассине вăрах пытарса каччăсене юриех вĕчĕрхентеретĕр. Мускаринкассинчен эпĕ. Вера ятлă, – пытармарĕ çулташ. – Хăв тата?

– Çĕньял Чурачăкран.

– Бакура та, Мускавра та пулнă. Сирĕн ял таçта сăрт хыçĕнче ларнине çеç пĕлетĕп.

Мускаринкасси хĕрĕ Вера Сизова Бакуна профтехучилище хыççăн ĕçлеме лекнĕ иккен. Унта азербайджана качча тухса кайран уйрăлнине те пытармарĕ вăл. Тăван ялне пăрахса килнине вара çапла ăнлантарчĕ:

– Кавказ арçынĕсен хăйсен хĕрĕсене улталас йăла çук, ытларах аякран килнисене, пирешкеллисене, юрату ытамне илеççĕ. Хамăн айванлăха пула эпĕ те вĕсен шутне лекрĕм, – ассăн сывларĕ Вера.

– Ан пăшăрхан. Манăн кукамай каланă тăрăх – шăтăк шăрçа урайĕнче выртмасть, – Верăна хавхалантарасшăн пулчĕ каччă. – Эсĕ кĕçех ялăнта юлатăн, манăн татах танккамалла-ха. Итле-ха, айта паян тĕл пулар сирĕн ялта. Манăн виçмине салтака каймалла. Çывăхрах паллашса юлар, кайран çыру та çӳретĕпĕр. Суймастăп: эсĕ мана килĕшрĕн.

– Хăвăнне ăçта хуратăн? Санашкаллин те чун савни пулмасан...

– Пулнă. Эрне каялла хирĕçрĕмĕр. Салтакран кĕтсе илес пирки усăмлăн каламарĕ.

– Эпĕ пушшех кĕтейместĕп. Манăн пиллĕкри Стасик пур. Азербайджан «чĕппи» эппин... Çĕр-шыв хӳтĕлевçине кӳрентерсен сылăх пулĕ тата. Юрать, тĕл пулăпăр, кайран куç курĕ. Эпĕ сирĕн яла пыраяс çук ĕнтĕ...

– Эпĕ хам килетĕп. Пирĕн ялтан кунта çити виçĕ çухрăм çеç.

– Вă-ă-ăт çавăнта пыратăн, –Ункă шывĕ хĕрринчи лăпсăркка хурăн еннелле тĕллесе кăтартрĕ Вера.

Якур шăмат кун ячĕпе хутнă мунчаран хăвăрт çăвăнса тухрĕ те вăрăм уттисемпе тĕл пулăва яшлаттарчĕ. Вера маларах çитнĕ те утă капанĕ çумне тĕршĕнсе ларнă. Якур курткине сарса унпа юнашар вырнаçрĕ. Хĕрарăм анасланă май сылтăм аллипе Якура мăйĕнчен ыталарĕ. Каччă ӳт-пĕвĕ тăрăх самантрах электроток кайрĕ тейĕн: вăл чĕтреме ерчĕ. Вĕсене янкăр тӳпери тулли уйăх анчах асăрханă пулĕ тенĕччĕ, анчах çав самантра хыçалта такам кăштăртатни илтĕнчĕ. Якур каялла çаврăнса пăхрĕ те аллине тачка хăмла шерти тытнă сухаллă çынна курах кайрĕ.

– Катăршнăйсем! Тупнă вĕсем улах вырăн. Ак пĕррех ислетсе илетĕп те, – упа пек мĕкĕрсе ячĕ старик, Ункă леш енчи йĕтем хуралçи.

Якурпа Верăна туххăмрах çавра çил тӳпене çĕклесе таçта аякка илсе кайрĕ тейĕн.

Икĕ çултан Якур Ямщиков сержант çĕр-шыв умĕнчи хисеплĕ тивĕçе пурнăçласа таврăнчĕ. Пĕрремĕш каçах хăй пекех çар тумне хывнă тус-юлташĕпе пĕрле Мускаринкасси клубне кайрĕ. Çула май тахăшĕ Вера Сизова çинчен сăмах пуçарчĕ. Вĕсем калаçнинчен ĕнерхи салтаксем ун патĕнче «юрату курсĕнче» хăнăху илнине ăнланчĕ. Кăшт утсан ушкăнран татăлса юлчĕ те тăван ялнелле çул тытрĕ. Ку хутĕнче кĕрхи сивĕ тӳпере тулли уйăх çутатмастчĕ, ăна чуна çӳçентерекен хура пĕлĕтсем хупланăччĕ.

Александр МОКИН.
Шупашкар хули

Тем те пĕр

Магнитогорскра /Челябинск облаçĕ/ 67 çулти хĕрарăм уроксем хыççăн шкула мăнукне илме пынă. Арçын ача асламăшне пĕр класра вĕренекен хĕр ача хăйне çыртса илни çинчен каласа панă, çыртнă вырăна кăтартнă. Çакă пенсионеркăна тарăхтарнă, вăл ачана кӳрентерекен патне таплаттарса пынă та аллинчен çыртса илнĕ, ун хыççăн мăнукĕпе килне таврăннă. Пулни-иртнине видеосăнав камерисем «ӳкерсе» илнĕ.

Полици уголовлă ĕç пуçарнă. Çапах та пенсионерка хăйне çаплипех айăплă тесе йышăнмасть, каçару та ыйтман. Хĕрарăм çирĕплетнĕ тăрăх – çав каçхине протезне тăхăнма маннă, хĕр ачана ыраттарнине ĕненмест.

Çемье хĕрарăма шелленĕ, уголовлă ĕçе чарса лартма ыйтнă.

* * *

Британире пурăнакан Долли Сэвилл часах 100 çулхи юбилейне паллă тăвать. Паян вăл – тĕнчери чи ватă бармен. Сэвилл Вендовер хулинчи хăна çурчĕн барĕнче Тĕнчен иккĕмĕш вăрçиччĕнех ĕçлеме пуçланă, ун чухне вăл 26 çулта пулнă. 7 теçетке çулта Долли паллă çынсен ыйтăвĕсене сахал мар тивĕçтернĕ, кусем – Элизабет Тейлор, Пирс Броснан...

Ватă пулин те хĕрарăм бартах ĕçлет. 94 çула çитиччен Долли эрнере 6 кун 6-шар сехет тăхтав вăхăчĕсĕр ĕçленĕ. 3 çул каялла çеç çăмăлрах график çине куçнă – халĕ вăл эрнере 3 хут ĕçе тухать, барта 3-шер сехет иртерет. «Манăн пуçлăх – чи лайăххи, – чунне уçса калаçать хĕрарăм. – Эпĕ çакнашкал кăсăклă ĕç пулнипе, кашни кунах нумай çынпа хутшăннипе телейлĕ».

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканĕсем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7481. Заказ 2157.